# ИЛЕМĔН ÇИТНĔ ĔМĔЧĔ...

— Ачам, инçе çулта аташас мар тесессĕн, кайсан-кайсан, хыçалалла çаврăнса пăх,— тетчĕ пирĕн ялти чи ăслă та ватă шурсухалсенчен пĕри — Ваçлей мучи.

Ираида Петрован «Кунçул юппинче» («Телейпе Илем») трагедине вуласассăнах эпĕ çак сăмаха аса илтĕм.

Чăваш халăхĕ вăрăм та йывăр, тертлĕ те хĕн-хурлă пурнăç çулне утса тухнă. Пирĕн историйĕмĕр аслă, пысăк. Ваçлей мучи каланă пек, халăхăмăрăн утса тухнă пурнăç çулне çаврăнса пăхни, çав çул çинчи чăрмавлă тумхахсемпе вилĕм шăтăкĕсене, ĕмĕт çăлтăрĕсемпе çăлăнăç çутисене тĕпчесе пăхни, вĕсене шухăшлавçă чун-чĕрипе ăнланса илсе, художник куçĕпе курса, ăсчах ăстăнĕпе, ăста юрăçă чĕлхипе вулакана каласа пама тăрăшни, ман шутпа, пысăк пархатарлăх, сăваплă ĕç пулса тăрать.

Телейĕмĕре темелле-и — чăвашсен маттур ывăлĕсемпе хĕрĕсем мĕн ĕлĕкренех тăван халăхăн историне, вăл утса тухнă пурнăç çулĕйĕрне ăнлантарса пама тăрăшнă. Пирĕн чаплă çыннăмăр, пĕрремĕш писатель, историк, этнограф, фольклорист Янтуш Çпиркки (С. М. Михайлов) иртнĕ ĕмĕртех чăвашсен тĕп тымарĕсем пирки шухăшланă, вĕсем ку тăрăха тухăç енчен килме пултарнине палăртнă. Хаклă юрăçăмăр Чăваш Хвети те, улăп çыннăмăр И. Я. Яковлев та, К. В. Иванов та, Çеçпĕл Мишши те чи малтан тăван халăхăн иртсе кайнă кунçулĕ пирки шухăшланă, иртнине кирлĕ пек ăнланса, пулассине курма тăрăшнă.

Янтуш Çпиркки, Чăваш Хвети, Çеçпĕл Мишши пек мал ĕмĕтлĕ, аслă чун-чĕреллĕ çынсем пирĕн тата ĕлĕкрех те пулнă иккен. Ираида Петрова трагедийĕнчи тĕп геройсем — Илемпе Телей (тепĕр тĕрлĕ ячĕ унăн Вырăх) — шăп та лăп çавсен шутĕнчисем пулса тăраççĕ те ĕнтĕ.

Ку произведенири ĕçсем пин çул каялла, вуннăмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пулса иртеççĕ. Çак тапхăра пирĕн çĕршывра çеç мар, тĕнче историйĕнче те пит уçăмлăн çутатса паман-ха, çавăнпа Ираида Петрован асăннă трагедийĕ пирĕншĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕнтĕ. Ун чухне пирĕн авалхи асаттесен, Атăл çинчи пăлхарсен патшалăхĕ аталанса-çирĕпленсе пынă. «Пăлхарсем — çĕр ĕçлесе пурнакан халăх, вĕсем тулă, урпа тата вир йышши тĕрлĕ тырпул акса тăваççĕ»,— тесе çырнă пирĕн авалхи асаттесем çинчен араб писателĕ Ибн-Русте. Пăлхар патши Эльмуш (чылай чухне ăна Алмуш теççĕ, Ираида Петрова трагедийĕнче те çапла каланă) мал ĕмĕтлĕ, пуласлăха хăй евĕрлĕ ăнланма пĕлекен çын пулнă. Вăл славянсемпе пĕрле Хазар каганачĕн пусмăрне хирĕç кĕрешнĕ, пăлхар патшалăхне çирĕплетессишĕн тăрăшнă.

Ун чухне хазарсем Каспи тинĕсĕ таврашĕнче хуçаланни, вĕсем çурçĕрелле талпăнса пыни пăлхарсене питĕ хĕн кÿнĕ. Эльмуш вĕсене çĕнес, пурнăç çулĕ çинчен сирсе ярас тесе, аяккарахри çĕршывсемпе те туслашма шутлать, çав сăлтавпах ислам тĕнĕпе пурнакан Багдад халифачĕпе çыхăнать. Тен, тата вăл пурне те ислам тĕнĕ йышăнтарсан тĕрлĕ йăхсене пĕр-пĕринпе çирĕпрех пĕрлештерме, патшалăхне вăйлатма та лайăх пулĕ, тенĕ-и. Ахальтен мар ĕнтĕ И. Петрова трагедийĕнче Эльмуш (Алмуш) çапла калать:

Пурне те ислама кĕртсен,
Халăха тыткалама çăмăлтарах пулать...
Багдадпа туслашсан,
Хасарсене пуç памăпăр эпир!
Пусмăрласа илеймĕç пирĕн хĕрсене!
Мĕн тинĕсе çити пур Атăл тăршшĕпе
Çул хывăпăр хĕсĕрлесе хасарсене!

Тен, Багдад халифĕпе туслашас тени Эльмушшăн йăнăш та пулнă пулĕ. Тен, унăн, таçта аякра пĕр шухăшлă халифсем шыриччен, славянсемпе çирĕпрех туслашма тăрăшмалла пулнă пулĕ, анчах эпир халĕ кун пирки пит нумаях калаçар мар. Историре çакă паллă: хура халăх Эльмуш шухăшне кăмăлламан, хăйне ют пулса тăракан ислам тĕнне йышăнма, хăй пурнăçĕн хăнăхнă йĕркине улăштарма килĕшмен, пăлхава çĕкленнĕ.

Ираида Петрова хăйĕн «Кунçул юппинче» трагедийĕнче çак йывăр тапхăра çырса кăтартать. Эпĕ, унăн хăшпĕр шухăшĕсемпе килĕшместĕп пулсассăн та, произведенин пахалăхне ырлатăп. Çакăн пек кĕнекене пирĕн халăх тахçантанпах кĕтнĕ. Пыра-киле çак йывăр та кăткăс тапхăр çинчен çĕнĕ романсемпе повеçсем те пулĕç-ха, çапах та малтанхи япалан илемĕ, унăн техĕмĕ, вăйĕ кайранхисен хушшинче ан çухалтăрччĕ. Ку сăмаха эпĕ ахальтен каламастăп, мĕншĕн тесен Ираида Петрова трагедийĕнчи пурнăç чăнлăхĕнчен пулса пыракан характерсен кĕрешĕвĕ, юратăвĕ, ĕмĕчĕ, хурлăхĕ, терчĕ ĕненмелле, шанмалла. Произведенин пахалăхне çакăнтан виçсе хаклама тытăнмалла та ĕнтĕ. Историри фактсене тĕрлĕ ученăйсем, сайра хутра кăна пулин те, тĕрлĕрен ăнлантарма пăхаççĕ, тен, хăшпĕрисем ку кĕнекери истори чăнлăхĕ пирки те тĕрлĕрен шухăшлĕç, çавăнпа эпĕ сăнарсен ĕçĕнчен тухса тăракан пурнăç чăнлăхне çине тăрсах палăртас терĕм.

«Вăрман сĕм хÿттипе пурнать юман»,— тет Телей халăхран уйрăлса кайнă, халăх ĕмĕт-шухăшне шута хуман Юман ятлă ĕмпĕве. Тымарне каснă, пĕччен юлнă юман-йывăç мĕн тери сарлака та тĕреклĕ пулсан та нумаях пурăнаймасть, типсе хăрать, ăна вара пĕрпĕр çил нимĕн те мар тÿнтерсе ярать. Хăй халăхĕнчен татăлса кайнă ĕмпÿ те çак тымарсăр йывăç пекех тĕлли-паллисĕр çухалать. Акă Юман ĕмпÿ трагедийĕн тĕп сăлтавĕ. Телей ертÿçĕ пулнин сăлтавĕ те шăп та лăп вăл хура халăхпа туслă пулнинче, унпа тарăн тымарпала çыхăннинче. Телей кĕтÿ кĕтсе пурăнать, вăл ĕмпÿ те, ятлă-сумлă çынах та мар, анчах тăван халăх çул юппинче тăнă чухне пуласлăха, çитес кун чăнлăхне ĕмпÿсемпе çарпуçĕсенчен лайăхрах ăнланса илет, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм чун-чĕрипе хăй пек ĕççыннисемшĕн тăрăшать, вĕсен телейĕшĕн пурăнать.

Мĕнле килйышра çуралса ÿснине пăхас-тăк, Илем мĕн пĕчĕкренех урăх ушкăнра, Телее (Вырăха) хирĕç тăракансен шутĕнче пулмалла

пек. Илем—Юман ёмпӳн юратнӑ хӗрӗ. Ҫепӗҫ чун-чӗреллӗ, кӑвакар-чӑн кӑмӑллӑ пике ашшӗне те, ытти турхан-тӑрӑна та хуман, мӗн пӗчӗкренпех ӗҫлесе, тар тӑкса, хура ҫӑкӑр ҫисе пурнакансен хуйхи-суйхине ӑнланать, ҫакӑ ӑна чӑн-чӑн кӗрешӳҫӗ тӑвать, Телей майли-сен ушкӑнне илсе ҫитерет. Илемшӗн чура та ҫынах, Илемшӗн славян та, пушкӑрт та, ҫармӑс та хӑйпе тан ҫынах. Илем хӑйне пӑхса ӳс-тернӗ ватӑ хӑрхӑма, славян хӗрарӑмне, амӑшӗ пекех курать, унӑн кашни сӑмахне чӗри патне илет. «Эс васкамасӑр кӗллӳне пӗтер, анчах ватта тек ан кӗттер»,— тет ӑна ватӑ хӑрхӑм Валуш. «Ыйтатӑп, пӳ-лӗхҫӗм, ан йӗтӗр тек мамук (Валуш)... тата ват аттеме ыр сывлӑх пар», тет те Илем ун сӑмахне итлесе, часрах хӑйне кӗтекен ватӑ кӗс-леҫӗпе калаҫу пуҫлать... Илемшӗн сӑнчӑрласа лартнӑ чура та ҫынах, вӑл ӑна та юлашки укҫине парса ирӗке кӑларма хатӗр... Куратпӑр ӗнтӗ, ҫыннӑн пархатарлӑх камран ҫуралнинчен кӑна килмест. Тӑван халӑха юратнӑ туйӑмне Илем мӗнпур инкек-хурлӑха пӑхмасӑрах упрать. Багдад халифӗ вӑл хушсассӑн хӑй ҫарне ярса, унӑн ашшӗне каллех ӗмпӗве лартма та хатӗр. Анчах та: «Мана савсан, ман туссе-не хӑтар. Ирӗклӗх пар»,— тет Илем ӑна. Тӑван ҫӗршыв уншӑн — кун ҫути, Тӑван халӑх телейӗ, ирӗкӗ ашшӗ телейӗнчен те хаклӑрах.

Тӑван ҫӗршывӑма курсан,
Ҫӗр-тӑпрана
Чӗркуҫленсе чупту
Ман вырӑна... —

тесе хушса ярать вӑл Багдадран Атӑл ҫине каякан янташне. Унӑн вилӗмӗ те хӑйне евӗрлӗ ҫӗнтерӳ. Вӑл тискер феодализм саманипе кӗ-решсе ҫӗре кӗрет, вилӗмӗпе те пулин хӑйӗн янташӗсене ирӗклӗхпе ни-кама пӑхӑнманлӑха пурнӑҫран та ытларах хакламаллине кӑтартать.

Илем нумай пурӑнман, Багдадра вилнӗ, анчах унӑн символла кунҫулӗ калама ҫук вӑрӑм, паян куна та ҫитрӗ, килес ӗмӗрсене те тӑсӑлӗ. Унӑн кунҫулӗ — унӑн ӗмӗтӗнче. Унӑн ӗмӗчӗ вара халӑхра ни-хӑҫан та вилмен, вилмест те. Пин ҫул каялла пурӑннӑ Илем пикен ҫутӑ ӗмӗчӗ пирӗн куна ҫитрӗ, вӑл ӗмӗте ҫитерме пире Аслӑ Ок-тябрь пулӑшрӗ.

Тымарсӑр йывӑҫ пулмасть. Ҫавӑн пекех историсӗр халӑх та ҫук. Тӗрлӗрен колонизаторсемпе буржуалла элекҫӗсем халӑха мӗн ӗлӗк-рен хӑйӗн тымарӗнчен, историйӗнчен татасшӑн тӑрӑшнӑ. Халӗ те анӑҫри хӑшпӗр суя ученӑйсем чӑвашсене историсӗр халӑх пек кӑтар-тасшӑн. Коммунистсен партийӗ пире хамӑр историйӗмӗре кирлӗ пек хаклама вӗрентет, вӗсен суялӑхне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Ҫак тӗ-лӗшрен те Ираида Петрова трагедийӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ, пирӗн вӑ-хӑта питӗ кирлӗ произведени пулса тӑрать. Унта пусмӑрта пурна-кансен пӗрлӗхне те, тӗрлӗ халӑхсен хушшинчи туслӑха та кирлӗ пек уҫса панӑ. Ку произведени пире иртнине упрама, пуласлӑха савма вӗрентет, халӑх телейӗшӗн ӗҫлеме хавхалантарать.

Юлашки ҫулсенче пирӗн литературӑра тӑван халӑх пурнӑҫӗн авалхи тапхӑрӗсене ҫутатса паракан произведенисем сахал мар пул-чӗҫ. Ираида Петрова хӑйӗн трагедийӗнче чи авалхи тапхӑра тӗпчеме те шикленмерӗ. Вӑл илсе кӑтартнинчен те авалраххи ҫинчен Болгари писателӗ Евгений Константинов хӑйӗн «Ӗнтрӗк» романӗнче ҫеҫ ҫыр-нӑ, унта вӑл чӑваш тӑхӑмӗсен улттӑмӗш тата ҫиччӗмӗш ӗмӗрсенчи пурнӑҫне ҫутатса панӑ... Пыра-киле ҫакӑн пек произведенисен шучӗ ӳссех пырасса эпӗ шансах тӑратӑп.

Юхма МИШШИ